# Сказка Маленькая Птичка



Ку ёҫ тахҫан-тахҫанах, авалах пулнӑ...

Кӗр пуҫланнӑ-пуҫланманах сасартӑк чӑтма ҫук сивӗсем килсе ҫитнӗ тет. Пур кайӑк-кӗшӗк пӗрле пуҫтарӑнса канаш тӑвать те карталанса ӑшӑ еннелле вӗҫе пуҫлать. Ҫӗлен-калта ниҫта кайса кӗреймесӗр ӑҫта шӑтӑк пур, ҫавӑнта кӗре-кӗре пытанаҫҫӗ. Анчах пӗр пӗчӗк вӗҫен Кайӑк, ӑнсӑртран ҫунатне хуҫнӑскер, вӗҫсе каяйман та пӗчченех тӑрса юлнӑ. Нимӗн те тума пӗлмен. Пуҫне чикнӗ те ҫакӑнтах шӑнса вилмелле пулать пуль ӗнтӗ тесе шухӑшласа ларнӑ. Йӗри-тавра пӑхкаласа хӳтӗ вырӑн шыранӑ.

Пӑхать-пӑхать те инҫе те мар аслӑ вӑрмана курать. «Ҫав вӑрмана кайса пӑхам-ха, йывӑҫсем мана ӑшӑтмӗҫ-ши?» — тет пӗчӗк Кайӑк сывласа илсе. Хӑйӗн аманнӑ ҫунатне йӑкӑлт-йӑкӑлт тутарса вӑрман хӗррине ҫитет вӑл.

Вӑрман хӗрринче кӗмӗл Хурӑн ларать хумханса. Кайӑк ун умне йӑлӑнма пырать.

— И-и-и, лӑс Хурӑн, лӑс Хурӑн, хӑвӑн патна ҫуркуннеччен пурӑнма яр-ха, — тет.

— Чипер калаҫ! Мӗн хӑтланасшӑн эсӗ? Ман хамӑн ҫулҫӑсене пӑхса усрамалла, саншӑн чӑрманаса пулмастех, — тет Хурӑн шурса кайса.

Сиккелесе пырать Кайӑк хуҫӑлнӑ ҫунатне сӗтӗрсе. Пӑхать — пысӑк Юман ларнине курать.

Кайӑк Юмана йӑлӑнать:

— Эй, паттӑр Юман, хӑвӑн ӑшӑ тураттусем хушшине ҫуркуннеччен кӳртсем,

— тет.

— Çапла пулмасăр! — тет Юман турачĕсене сиктерсе. — Сан пеккисене кӳртсе çеç яр, хĕл каçиччен манăн пĕр йĕкеле те хăвармăн эсĕ. Кай, кай, ан та тăр кунта найкăшса.

Мĕскĕн Кайăк каллех малалла каять, йăкăлт-йăкăлт сикет хуçăк çунатне сĕтĕрсе. Шыв хĕррине çитет те унта пысăк Йăмра ларнине курать. Кайăк Йăмрана калать:

— Ырă йывăçăм, Йăмраçăм, санăн тураттусем çăра, яр-ха мана хăвăн патна хваттере хĕл каçиччен пурăнма, — тет.

— Утах малалла! Эпĕ пули-пулми йывăç мар, сан пеккисемпе сăмах та хушмастăп, — тет мухтанса.

Мĕскĕн Кайăк аптăрасах çитет, нимĕн тума та пĕлмест. Ывăннипе аран-аран лăкăштатса, хуçăк çунатне сĕтĕрсе вăрманваррине çитсе кĕрет.

Мĕскĕн Кайăка катаранах симĕс Чăрăш асăрхать те:

— Ай-яй, мĕскĕн, ăçта каятăн капла? — тесе ыйтать.

— Хам ăçта кайнине хам та пĕлместĕп, — тет Кайăк.

— Епле пĕлместĕн?

— Телее мар, хурлăха, — тет Кайăк хурлăхлă сасăпа.

— Мĕншĕн юлташусенчен тăрса юлтăн-ха? — ыйтать Чăрăшĕ.

— Ман çунатăм хуçăлчĕ, çавăнпа эп вĕçейместĕп. Вăрманти йывăçсенчен хваттере яма йăлăнса пăхрăм та, нихăшĕ те хĕрхенмерĕç.

— Э-э-э, апла пулсан хам патăмра пурăн. Ак лар çак туратăм çине, вăл чи ăшши, — тет Чăрăш ăшă кăмăлпа.

Чăрăшпа юнашарах ватă Хыр ӳснĕ. Вăл та мĕскĕн Кайăка хĕрхенсе каланă:

— Манăн туратсем ăшша питех тытмаççĕ те, çапах эпĕ сана сивĕ çилсем тивесрен сыхласа тăрăп.

Кайăк чăрăш турачĕсем хушшине ăшă çĕре кĕрсе ларать. Хыр ăна сивĕ çилсенчен хăйĕн шанчăклă турачĕсемпе сыхласа усрама тытăнать.

Кăна пĕчĕк çеç Уртăш йывăç курать те калать:

— Сана, пĕчĕкçĕскерне, эпĕ хĕл каçичченех хам çырласемпе тăрантарса усрăп.

Çапла вара телейсĕр Кайăк питĕ лайăх пурнăçпа пурăнма пуçлать. Ытти Йывăçсем çакна курнă та тиркешсе калаçнă:

— Эй, чăрманăп-и çав ăçтиçук Кайăкшăн, — тесе кулнă Хурăн Чăрăшран.

— Ма парăп эпĕ ăна хамăн йĕкелĕмсене, — тет Юманĕ хумханса.

— Эпĕ пули-пулми кайăкпа калаçмастăп та, — тет Йăмра.

Çапла вĕсем сухăрлă йывăççене тиркесе мăн кăмăлланса кулкаласа калаçнă.

* * *

Пĕр каçхине вăрманта сивĕ çил улама тапратнă. Тискер тăвăл тулашнипе йывăç çулçисем пурте тăкăнса пĕтнĕ.

Анчах Тăвăл ачи малтан ашшĕнчен кайса ыйтнă:

— Пур йывăççен çулçисене те çаратмалла-и е хăшĕсенне хăвармалла-и? — тенĕ.

— Çук, апла юрамасть, пĕчĕк Кайăка усрава илнĕ йывăççен çулçисене пĕрне те ан тивнĕ пултăр, вĕсем хĕлĕпех симĕс тăччăр, — тенĕ.

Çил вара Чăрăшне те, Хырне те, Уртăшне те тивмен тет.

Вĕсем çавăнпа ку таранчченех хĕлле те, çулла та, ĕмĕр-ĕмĕрех симĕс юлнă тет.

Мультимедийная онлайн-библиотека
“Сказки Поволжья”

Иллюстрированые и озвученные сказки народов Поволжья.